Ĕç – пурнăç никĕсĕ

Шкулта вĕреннĕ вăхăтра укçа ĕçлесе илме пулать-и?

"Ĕçлеме ĕлкĕрĕн-ха...", "Ёмĕр тăршшĕпех ĕçлеме тивĕ..." Ашшĕ-амăшĕнчен, аслă юлташсенчен çакăн евĕр каларăшсене сахал мар илтме тӳр килет. Тĕрĕссипе вара çаплах килсе тухать пурнăçра, мĕншĕн тесен кунçулăн ытларах пайне ĕçпе çыхăнтаратпăр. Анчах та шкул ачине вĕренӳ тапхăрĕнче никам та ĕçе кӳлĕнтермест. Çапах та вĕреннĕ вăхăтра ĕçлемелле мар тени тĕрĕс пулать-ши, каникул саманчĕсене мĕнлерех ирттермелле-ши?

Шкул ачи ĕçрен мĕнле усă курма пултарать-ха? Яр уççăнах палăраканни вара укçа-тенкĕ шутланать. Ĕç харпăр хăйĕн вăйĕ тата пултарулăхĕ пуррине туйма май парать. Ачан пысăках мар ĕç опычĕ вара ăна пурнăç çулĕ çинче хăй тĕллĕн тăма пултаракан ӳснĕ çын шайĕнче тытма май парать. Çакă, паллах, укçа-тенкĕне те хаклама вĕрентет.

Çамрăксем вĕренӳрен пушă вăхăтра е каникул кунĕсенче кăштах та пулин укçа-тенкĕ ĕçлесе илес шухăшкăмăллине ĕçпе тивĕçтерекен центрта вăй хуракансем уйрăмах лайăх ăнланаççĕ. Ĕçпе тивĕçтерекен центр çул çитмен çамрăксемпе (14-18 çулхисем) вăхăтлăх ĕç тупса парас тĕлĕшпе килĕшӳсем çырать.

2007 çулхи январь-март уйăхĕсенче пирĕн пата ĕçлес шухăшлă 62 çамрăк пулăшу ыйтма килчĕ. Вĕсене пурне те вăхăтлăх ĕçе вырнаçтартăмăр. Калайкасси шкулĕпе тата лицейпа килĕшӳсем турăмăр.

Пĕтĕмĕшле илес пулсан, çамрăксем çулталăк тăршшĕпех ял хуçалăх ĕçĕсене пурнăçлаççĕ. Вĕсем шкул территорийĕсене тирпей-илем кĕртеççĕ, симĕслентереççĕ, косметика юсав ĕçĕсене туса ирттереççĕ, шкул çывăхĕнчи лаптăксенче вăй хураççĕ тата ытти ĕçсене пурнăçлаççĕ. Ĕçпе тивĕçтерекен центр шкулсенче вĕренекенсене ĕçлесе илме майсем туса парать. Çавна май Чăваш Республикине федераллă фондран 2007 çулта тĕллевлĕ усă курма 177,3 пин тенкĕ укçа уйăрнă.

Юрăхлă ĕç

Кашнин пур енлĕ аталаннă çын пулмалла, ĕçе шута хума пĕлмелле. Раççей Федерацийĕн Конституцийĕнче çапла каланă: "Çыннăн прависемпе ирĕкĕ – чи пысăк пуянлăх. Гражданинăн прависемпе ирĕклĕхне хӳтĕлесси вара – патшалăхăн тивĕçĕ". Çакă вара çынна вăл е ку ĕçе суйласа илме ирĕк парать.

Ĕçпе тивĕçтерекен центр социаллă сферăри объект шутланать, ĕççĕрлĕхрен хăтарас тĕлĕшпе патшалăхăн гарантиллĕ прависене пурнăçа кĕртессишĕн чылай ĕç пурнăçлать.

Центрăн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри обществăллă ĕçсене йĕркелесси пулса тăрать. Çавна май районти обществăлла ĕçсене ĕççĕр шутланакан 80 çынна явăçтарма палăртнă. Ĕç вырăнĕсене йĕркеленĕ ĕçпе тивĕçтерекен центр предприятисемпе тачă çыхăнура ĕçлесси çинчен ятарлă килĕшӳ тăвать. Çулталăк пуçланнăранпа 12 килĕшӳ тума ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ. Вĕсен шутне çаксем кĕчĕç: районти шалти ĕçсен пайĕ, прокуратура, миравай судьян 1 № суд участокĕ, район администрацийĕ, "Передовик" хуçалăх, "Муркаш пасарĕ" МУП, Мăн Сĕнтĕрти 2 № больница.

Ĕççĕр çынсене вăхăтлăх ĕçе явăçтарассинче обществăлла ĕçе йĕркелени питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Мĕншĕн тесен ĕççĕррисенчен ятарлă профессине ыйтмаççĕ. Çакă вара ятарлă хатĕрленӳçĕрех ĕçлесе илме май парать. Чылай чухне килĕшӳллĕ ĕçе пикенме те пулать.

Çуркуннехи тата çуллахи тапхăрта пурнăçламалли ĕççем шутне тавралăха тирпей-илем кĕртесси, симĕслентересси кĕрет. Обществăлла ĕççем йĕркелени ĕççĕр граждансене ĕç патне туртăнма май парать. Çакă иртнĕ практикăран та аван курăнать.

Кама уйрăмах йывăр, çавна пулăшу кирлĕ

Кулленхи пурнăçри йывăрлăха асăнса пĕтерес те çук, анчах та "çут çанталăк кӳрентернисен" ыйтăвĕ уйрăмах çивĕч тăрать. Сывă çынпа танлаштарсан, инвалида ĕç тупма чылай йывăр. Ун йышшисемпе ĕç рынокĕ ытлах интересленмест. Ĕç паракансем вĕсене ĕçпе тивĕçтерессинче тĕрлĕ йывăрлăхсем пирки палăртаççĕ. Ĕçпе тивĕçтерекен центршăн инвалидсене ĕç вырăнĕ шырама ӳкĕтлесси хăш-пĕр йывăрлăх каларса тăратать.

Инвалидсемшĕн хăш-пĕр ăнланманлăха сирес тесе центрта вăй хуракансем тĕрлĕ профконсультаци, профтестировани, тренинг ирттереççĕ. Енчен те центр пулăшу ыйтма килнĕ инвалида ĕçпе тивĕçтереймерĕ пулсан, ăна урăх енĕпе вĕрентме май пуррине пăхса тухаççĕ. Чи малтан вара ĕç рынокĕнчи лару-тăрава, медицина экспертизин рекомендацийĕсене тĕпе хума тивет. Вĕсене ытларах вăхăтлăх ĕçе вырнаçтарассин ятарлă программисене хутшăнма сĕнетпĕр.

Ĕçпе тивĕçтерекен центр пур харпăрлăх формиллĕ предприятисемпе организацисен ертӳçисене те обществăлла тата вăхăтлăх ĕç вырăнĕпе тивĕçтерессинче активлăрах пулма ыйтать.

Çамрăк специалист тата ĕçпе тивĕçтерекен центр

Юлашки вăхăтра районти ялсенчи çамрăксене ĕçпе тивĕçтересси çивĕч ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. Уйрăмах çакă професси заведенийĕсенчен вĕренсе тухнă çамрăк специалистсене пырса тивет. Шăпах вĕсем пирĕн патра учетра тăракан ĕççĕр çынсен ытларах пайĕ шутланаççĕ.

Вĕсен вĕренсе тухнă специальноçпа ĕç опычĕ çук, çавăнпа та ĕçе вырнаçаймаççĕ. Çакă ĕççĕрлĕхĕн сăлтавĕ пулса тăрать те. Çамрăк специалистăн ĕç шырас, ĕçе вырнаçас пĕлӳ çук. Ĕç рынокĕн çирĕп условийĕсенче харпăр хăй пултарулăхне шанманни çамрăкăн иккĕленӳ туйăмне çуратать.

Çамрăксем хушшинче йĕркесĕрлĕх те тĕл пулать. Кунта алкоголизмпа наркомание асăнса хăвармалла. Çавăнпа та ĕçпе тивĕçтерекен центр çамрăк специалистсем çине пысăк тимлĕх уйăрать, ĕçе явăçтарма тăрăшать. Вĕсемпе центр тĕрлĕ ĕççем, каласусем ирттерет. "Развитие адаптационного потенциала", "Развиваем конкурентоспособность", "Повышение активности на рынке труда", "Планирование карьеры" тата ытти тренингсем çамрăк специалистсемшĕн питĕ вырăнлă. Çавăн пекех вĕсене, кăмăл пулсан, уйрăм консультаци пама та пултаратпăр. Çакăнта ĕçпе тивĕçтерекен центр районти предприятисемпе организацисем ĕççĕррисене вăхăтлăх ĕçпе тивĕçтерме чылай ĕç туса ирттернине палăртмалла. Уйрăмах вĕренӳ заведенийĕсенчен вĕренсе тухнă 18-20 çулхи пĕрремĕш ĕç вырăнĕ шыракан çамрăксем çине пысăк тимлĕх уйăрнине палăртмалла.

Çакна эпир ятарлă программăпа пурнăçлатпăр. Программăн ырă витĕмне вара чылай предприятисемпе организацисен ертӳçисем туйса илчĕç. Мĕншĕн тесен вĕсен хăйсен специалисчĕсене вăхăтлăх ĕçе явăçтарма тивмест. Пысăк укçа-тенкĕ тăкакламасăрах канăва, командировкăна кайнă е чирленĕ специалистсене улăштарма май пур. Ĕççĕр çамрăк специалист вара професси пĕлĕвне хăнăхать тата яланлăх ĕç вырăнĕ тупма пултарать.

Районти ĕççĕрлĕх шайĕ

2007 çулхи январь-февраль уйăхĕсенче ĕçпе тивĕçтерекен центра ĕç шыраса 146 çын килнĕ, вăл шутран 62 вĕренекен пушă вăхăтра ĕçлеме кăмăл тунă.

Ĕç шыракансен 32,5 проценчĕ ĕçрен хăйсен ирĕкĕпе тухнă, 52,5 проценчĕ ĕçрен хăтарнисем шутланаççĕ.

Çак тапхăрта ĕç шыракансен 8 процентне ĕçпе тивĕçтернĕ, вăл шутран 68,3 проценчĕ хĕрарăмсем пулнă, 78,3 проценчĕ 16-29 çулхи çамрăксем.

Ятарлă программăсемпе те чылай ĕç пурнăçланă. Социаллă сферăри тата ял хуçалăхĕнчи обществăлла ĕçе 36 çынна явăçтарнă. 10 çын ĕç шыракансен клубĕнче вĕреннĕ. 569 çын професси ориентаци пулăшăвне илнĕ. Ĕç шыракан 15 çынна вĕренме янă, 5-шĕ вĕренсе пĕтернĕ. Мартăн 1-мĕшĕ тĕлне 87 ĕççĕр çын шутланнă е ĕççĕррисен шайĕ 0,41 процентпа танлашать.

Т. АНТОНОВА,
районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи.

Районти шалти ĕçсен пайĕнче

Чи кирли – йĕркелĕхшĕн, çынсемшĕн тăрăшни

Районти шалти ĕçсен пайĕнче ĕçлекенсемшĕн мартăн 20-мĕшĕ уйрăмрах кун пулчĕ. Çакăнта ĕçлеме пуçлани çулталăк çитеймен милици ĕçченĕсем присяга тытрĕç. Хумхануллă самант савăнăçлă лару-тăрура иртрĕ. Нелли Александровна рядовой милици, патрульпе пост служба взвочĕн милиционерĕ, Андрей Николаевич Николаев милицин кĕçĕн лейтенантчĕ, Уйкас Янасалпа Чуманкасси ял тăрăхĕсенчи милицин участокри уполномоченнăйĕ, Александр Михайлович Ванюшкин милици лейтенантчĕ, патрульпе пост служба взвочĕн инспекторĕ пурнăçра пысăк утăм турĕç. Коллектив умĕнче хăйсем шалти ĕçсен пайĕнче РФ Конституцийĕпе саккунĕсене хисеплесе, тĕпе хурса, çирĕп пăхăнса, гражданинăн прависемпе ирĕкне хĕсĕрлемесĕр ĕçлеме, пуçлăхсем хăйсене панă приказсене, служба тивĕçĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлама, хăйсен сăмахĕсенчен иртсен РФ Саккунĕсемпе килĕшӳллĕн явап тытма хатĕрри пирки тупа турĕç.

Районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е.Д. Макаров присяга тытнă çамрăк милици ĕçченĕсене службăра ăнăçу сунчĕ.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Сăн ӳкерчĕкре: присяга тытнă хыççăн.

01 пĕлтерет, асăрхаттарать

Кун пекки ан пултăрччĕ

Районти тивĕçлĕ структурăсем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе специалисчĕсем, вырăнсенчи депутатсен корпусĕсем хăйсен ĕçне ответлăха туйса пурнăçлани район территорийĕнче пушар тухаслăха пĕчĕк шайра тытма пулăшать. Пĕчĕк шай пĕчĕк шайпа та, анчах "хĕрлĕ автан" хуçаланнă кашни тĕслĕхех общество умне пысăк хăрушлăх каларса тăратать.

Акă, мартăн 21-мĕшĕнче 17 сехет те 25 минутра районти пушар чаçне Йӳçкассинчен пушар тухни çинчен пĕлтерни çитрĕ. Инкек вырăнне районта пушар сӳнтермелли вăйсене явăçтармалли планпа килĕшӳллĕн "Ударник" хуçалăхăн икĕ пушар машини тата районти 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн экипажĕ тухрĕç. 17 сехет те 27 минутра вырăна "Ударник" хуçалăхăн пĕрремĕш пушар машини çитсе В. Иванов хуçалăхĕнчи ампарта ирĕке кайнă çулăмпа кĕрешме пуçлать те 10 минутран пушар сарăлас хăрушлăх сирĕлет, 17 сехет те 55 минутра пушара сарăлма памасăр тĕппипех сӳнтерме май килет. Хыççăнхи тĕпчев çакна кăтартса пачĕ. Кил хуçин 23 çулхи ывăлĕ Григорий 15-16 сехетсем тĕлĕнче киле çилленчĕк кăмăлпа таврăнать те сĕтел çине 40 тенкĕ укçа хурса ашшĕне эрех илсе килме ыйтать. Ашшĕпе амăшĕ те унăн ыйтăвне тивĕçтерме васкаманнине курсан, хайхискер пӳртрен тухса каять. Ашшĕпе амăшĕ телевизор пăхса юлаççĕ те хăйсен хуçалăхĕнче пушар тухни пирки пушар машинисем пырса кĕрсен çеç пĕлеççĕ.

Кил хуçи В. Иванов каласа панă тăрăх, ампарта 5 литрлă бензин канистрĕ пулнă, анчах пушара сӳнтерсен вăл тупăнмарĕ. Пушар тухнине курнисем тата кил хуçисем каласа панине пĕтĕмлетни çамрăк арçын хăйне çунтарса ярас тĕллевпе бензинпа усă курса çулăм тивертни пирки калать. Мĕншĕн тесен çулăм выляннă тĕлти япаласемпе диван шалаллах çунса кĕрсе каяйман, анчах унпа усă курнă çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ.

А. ИЗОНОВ,
патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн инспекторĕ.

Специалист сĕнет

Шăши чирĕнчен сыхланăр

Кăçал Раççейре ГЛПС е юнлă сивчир (халăхра ăна шăши чирĕ тесе калаççĕ) анлăн сарăлчĕ. Чăваш Республикинче те çак чирпе чирлекенсен шучĕ сахал мар. Пирĕн районта пĕлтĕр тата кăçал ГЛПС чирĕпе чирлекенсем пулман-ха, анчах та çак чиртен асăрханни пăсмасть, уйрăмах хамăр районтан урăх хуласемпе облаçсене ĕçлеме çӳрекенсен.

Ку чир чирлĕ шăшисенчен е шăшисем пăснă апат-çимĕç е сывлăш урлă лекет. ГЛПС е шăши чирĕ пӳрене тата тĕп нерв системине сиенлет.

Шăшисемпе йĕке хӳресем вирус ерсенех сиенлĕ шутланаççĕ, çак тапхăрта вĕсем чир сараççĕ. Чир чирлĕ çынран тепĕр çынна нихăçан та ермест. Çынсем çак чирпе сиенленни кăшлакан чĕрчунсем çурт-йĕрпе ытти хуралтăсене куçса çӳренипе çыхăннă.

Шăши чирĕпе кирек кам та чирлеме пултарать. Кĕрхи-хĕллехи, кĕркуннехи-çуллахи тапхăрсенче çак чирпе чирлекенсен шучĕ уйрăмах ӳсет, унпа ытларах ял хуçалăх ĕçченĕсем, вăрман хатĕрлекенсем чирлеççĕ.

Чирĕн вăтам тапхăрĕ 9-35 куна çитет, вăтамран 12 кунпа танлашать.

Чир сасартăк пуçланать: шăнтса пăрахать, температура 39-40 градуса çитет, пуç хытă ыратать, вăй пĕтет, кăмăл пăтранать, хăстарать. Шăнтса пăрахакан тапхăр 5-7 куна пырать, ӳт çине вĕтĕ пăнчăсем пек шатрасем тапса тухаççĕ. Чир пӳрене вăйлă сиен кӳрет: шăк сахал тухать, хăш чух юнлă тухать, пачах тухма пăрахма пултарать. Çав вăхăтра питĕ вăйлă хăстарать, юн пусăмĕ чакать. Вăхăтра эмелленмесен, çын вилсе кайма та пултарать.

Чирĕн малтанхи паллисем пуçлансанах чирлĕ çынна больницăна хумалла, тӳрех сиплеме пуçламалла. Чир сарăлнă вырăнсенче микробсене пĕтерекен ĕççем туса ирттермелле.

Çавăн пекех шăши, йĕке хӳре шатăкĕсене питĕрмелле, вĕсем кил-çурта кĕрес çулсене пӳлмелле. Чир сарăлнă вырăнсене ĕçлеме кайнă чух харпăр хăй гигиенине çирĕп пăхăнмалла. Таса апат-çимĕç кăна çимелле, вĕретнĕ шыв кăна ĕçмелле.

Г. СОКОЛОВА,
врач-эпидемиолог.

Ятран асăнар-ха

Укçапа эрех çынна...

"Эрехĕн шăмми çук, ăна чăмламалла мар", – тет çутă шĕвекпе тусли. Вăл çаплах пулĕ те, анчах ĕçекенсене те, унăн çемйисене те терт-асап тӳстерет-çке. Ăна сутаканшăн вара çын сывлăхне хавшатни, ним айăпсăртан тăварлă куççулĕ тумлатни, унтан та йывăртараххи, ача-пăча сивĕ пӳртре выçă ларни чунри пĕр хĕлĕхне те хускатмасть пулас. Тимлĕрех пулар-ха, çак ырă мар ӳкерчĕке чылайăшĕ асăрханă. Çапла, асăрахатпăр, анчах курнă куçа курмăш тăватпăр. Унпа суту тăвакансене пĕлсе тăрсах, кирлĕ çĕре пĕлтерместпĕр. Хăшĕ-пĕри тата, чиркӳ патне çул тупнă пулсан та, çын куççулĕпе укçаллă пулма шутлать.

Саккуна пăсса эрехпе суту-илӳ тăвансене тытас тĕлĕшпе шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсем тăтăшах рейдсем ирттереççĕ. Çак ĕçĕн вара усси пурри туйăнать. Паллах, пурне те харăс тытаяс çук, çапах та пĕрерĕн-пĕрерĕн тăрă шыв çине каларма пулать.

Ку ĕçпе аппаланакансен пичĕсем кăштах та пулин хĕрелччĕр тесе, ятран асăнса "чыс-хисеп" тăвар-ха. Рыккакасси ялĕнчи О.Г. Шебалина, 1981 çулта çуралнăскер, ниçта та ĕçлемен. Çур литр таса спирта 7 килограмм ашпа улăштарнă.

Çурлатри ялĕнчи С.В. Кузьмина, 1964 çулта çуралнăскер, ăçта ĕçлени паллă мар, В.Р. Волкова çур литр сăмакуна 30 тенкĕпе сутнă.

Турхан ялĕнчи пенсионер ку ĕçпе ытларах аппаланнине палăртнă. В.Н. Никитина январĕн 11-мĕшĕнче А.С. Васильева 1,5 литр спирт 105 тенкĕпе туянтарнă. Çак кунах 0,4 литршăн 20 тенкĕ илнĕ. 1942 çулта çуралнăскер, ку ĕçе ытла та кăмăллана курăнать. Тепĕр кунне 0,5 литр спирта 35 тенкĕпе панă. Январĕн 16-мĕшĕнче 0,5 литр спирта 30 тенкĕпе икĕ хутчен сутни паллă.

Москакасси ялĕнчи В.В. Трихалкин, 1955 çулта çуралнăскер, 0,5 литр сăмакуна 40 тенкĕпе сутнă, ку ноябрĕн 17-мĕшĕнче пулнă.

Йӳçкасси ял тăрăхне кĕрекен Вăрманкас ялĕнчи 1966 çулта çуралнă В.М. Макаров декабрĕн 30-мĕшĕнче 50 тенкĕпе спирт сутнă.

Муркаш салинчи Набережная урамри Х.А. Скворцова, 1938 çулта çуралнăскер, Дмитриева пенсионеркăна 0,5 спирта 50 тенкĕпе туянтарнă.

Чуманкасси ял тăрăхне кĕрекен Çĕньял Апашри М.В. Николаева ниçта та ĕçлемен. 1977 çулта çуралнăскер, хăйсен ялĕнчи Галкина 150 грамм сăмакуна 10 тенкĕпе сутнă.

Хĕрĕх çичĕ çулхи Л.Н. Волкова, Çĕньял Орининта пурăнаканскер, 0,5 литр спирта Иванова гражданкăна 40 тенкĕпе туянтарни паллă.

Сентимĕр ялĕнчи К.А. Зайцева, кинемей çулне çитнĕ пулин те, ку ĕçпе аппаланма шикленмен. Февралĕн 23-мĕшĕнче 0,5 литр сăмакуна 50 тенкĕпе сутнă. В.Ю. Ступинан вара ăшне вут хыпнă пулас, çак наркăмăша туяннă.

Хĕрĕх тăватă çулхи Б.Ф. Ильин, Мăн Шаптакра пурăнаканскер, февралĕн 2-мĕшĕнче И.Н. Горохова çур литр сăмакуна 50 тенкĕпе туянтарнă.

И.И. Скворцов, 1936 çулта çуралнăскер, Шупашкар хулинчен хăнана килнĕ пулас. Çапла вара вăл В.В. Шачкова мартăн 14-мĕшĕнче 1 литр спирта 80 тенкĕпе сутать. Тепĕр кунне вара çур литр сăмакуна 50 тенкĕпе туянтарать. Çакăн пек "пысăк хисепе тивĕçнисене" малашне ятранах асăнăпăр.

Е. МАКАРОВ, районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ.